**Киле таврăнсан**

Эй, Кушлавăш, ешĕл уй, —

Çут ачалăхăм сăпки!

Пĕл, ăнланччĕ мана, туй:

Эс ман пурнăç кăвапи.

Туй — эп хушăн çуннине,

Пĕл — сана манмассине.

Йышăн мана ытамна —

Вăрçă хуçнă ывăлна!

Йышăн... Сывлăх пирчиччен

Пар канма чĕрçӳ çинче...

Ик-виç çул эп аякра

Саншăн тĕмсĕлтĕм ăшра:

Малтан — вăрçă хирĕнче,

Тыткăнра, ют çĕрсенче,

Унтан — хамăр çĕр-шывра,

Тĕрлĕ шавлă хулара.

Эс таçта та яланах

Аса килтĕн час-часах...

Эй, Кушлавăшăм, нихçан

Тĕрĕс ачуна ан ман!

Ирĕк пар,— атте-аннем

Йăва хывнă кĕтесре,

Вĕсен ашшĕ-амăшсем

Ĕмĕр пурăннă çĕртре

Киленме — вăрмансенче,
Çак вут-çиллĕ кунсенче.
Таврари сĕм вăрману,
Уй çинчи шенкер сăну —
Илĕртетчĕç ют çĕртен,
Сăрт-ту урлă, инçетрен...
Сан чĕрçӳ çинчи мăн ял —
Сăртламри Упакасси
Мана панăччĕ ăс-хал,
Пачĕ — сăвăçă сасси.
Уншăн — тав сана, рехмет!
Халь çав сас санпа пуплет...

Санăн тăрăх çӳресен —
Курăнать ман яш кун-çул,
Аслă вăрмана кĕрсен —
Эх, илемлĕхĕ мĕн чул!
Уй тӳписенчен пăхсан
Курăнать вун икĕ ял;
Вак шывсем юхаç туран:
Йĕкĕс, Кушлавăш, Çавал...
Çак йăмраллă тĕп ялсем,
Йăлтăркка юхан шывсем,
Хырлă, чăрăшлă вăрман —
Ĕмĕр тухмĕç асăмран;
Хуть таçта пулам, ĕçлем —

Пуçăмрах ман çак илем.

Вĕсенчен инçе кайсан —

Чĕреме касать суран;

Хуçăк турат типнĕ пек

Саншăн типшĕретĕп тек...

Ак халь çак уйра утса

Мĕн-мĕн пулнă — йăлт сăнап;

Иртнĕ пурнăçа курса

Йăл кулап е хурланап...

Эй, Кушлавăш, ешĕл уй,

Пĕл ман чунăма эс, туй:

Ĕмĕр манмăп эп сана;

Ан ман эс те ывăлна!

*1918, июнь*

*Элкер, С. Киле таврăнсан : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 202-203.*